1945 АВГУСТ 8 ЮНКУН 152(6903) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

„Тырӑ вырса пухас ӗҫ—вӑхӑтра тумалли ӗҫ, вӑл кӗтсе тӑма юратмасть. Вӑхӑтра пухса илтӗн—тырпуллӑ пултӑн, кая юлтӑн—ҫухатрӑн". *(Сталин)*

Вӑрлӑхлӑх тырра вӑхӑтра пухса кӗртер

СССР Совнаркомӗ «Тӗштырӑ культурисен вӑрлӑхӗсене акса тӑвас ӗҫе лайӑхлатасси ҫинчен» йышӑннӑ постановленире парти, совет тата ҫӗрӗҫ органӗсен умне 1945 тата 1946 ҫулсем хушшинче сортлӑ вӑрлӑхсем акса тӑвас ӗҫе вӑрҫӑччен хисене ҫитерме хушрӗ.

Ҫак паха задачӑна ӑнӑҫлӑн татса парас ӗҫе ҫӑмӑллатас тесе, Правительство селекци станцийӗсем, сорта сӑнакан станцисем, вӑрлӑх тӑвакан хуҫалӑхсем организациленӗ. Кӑҫал пирӗн республикӑра ҫӗнӗрен 10 райсемхоз тунӑ, ҫапла вара пирӗн пӗтӗмпе 23 райсемхоз пур. Ҫак хуҫалӑхсемпе колхозсенчи вӑрлӑх участокӗсенчен пухса илекен тӗштырра пӗтӗмпех вӑрлӑх фондне хывсан, пирӗн колхозсем сортлӑ вӑрлӑх ҫителӗклӗ таран хатӗрлеме пултараҫҫӗ.

Иртнӗ ҫулсенче чылай колхозсем вӑрлӑх участокӗсенчен пухса илнӗ тырра колхозри ытти тырӑпа хутӑштарса янӑ, тата хуҫалӑхра ытти ҫӗре ярса пӗтернӗ. Ку тӗлӗшпе Пӑрачкав, Чкаловски, Шӑмӑршӑ, Элӗк тата ытти районсем уйӑрмах палӑрса тӑраҫҫӗ. Иртнӗ ҫул Элӗк районӗнчи чылай колхозсем вӑрлӑх участокӗсене уйӑрӑм вырса илмен тата уйӑрӑм ҫапса уйӑрӑм амбарсене хуман. Райсовет исполкомӗ тӗштырӑ вӑрлӑхне ытти ҫӗре тӑкаклама ирӗк панӑ. Ҫавна пула пӗлтӗрхи октябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне кунта 13 колхозра вӑрлӑх уйӑрса хуман пулнӑ. Хӑшпӗр районсенче кӑҫал та вӑрлӑх участокӗсем уйӑрас тӗлӗшпе япӑх ӗҫлеҫҫӗ. Шӑхаҫан районӗнчи «Красный пахарь», «Правда» колхозсенче ку таранччен те вӑрлӑх участокӗсем уйӑрман. Кун пек тӗслӗхсем Ҫӗрпӳ районӗнчи Нӗрӗш ял Советне кӗрекен колхозсенче те пур.

СССР Совнаркомӗ йышӑннӑ тӑрӑх пирӗн республикӑри колхозсем тӗштырӑсен 80 процентне сортлӑ вӑрлӑх акмалла. Ҫак задачӑна пурнӑҫлас шутпа халӗ кашни колхозрах кӗрхи тырӑсен сортне тӗрӗслесе пӗлеҫҫӗ. Ҫак ӗҫе тӑвакан ялхуҫалӑх специалисчӗсене кашни колхозрах пур майпа та пулӑшса пымалла. Вӑрлӑх участокӗсем уйӑрман колхозсен халех вӗсене уйӑрмалла, ун ҫинчен ятарласа акт ҫырмалла тата ҫак участок тыррине уйӑрӑмӑн пухса уйӑрӑмӑн ҫапмалла, дезинфекциленӗ уйӑрӑм амбарсене хурса, кладовщик аллине акт тӑрӑх памалла.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «1945 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановленире харпӑрхӑй вӑрлӑх участокӗсенче ҫителӗклӗ таран вӑрлӑх хатӗрлемелле тӑвас ӗҫе нумай районсенче, колхозсемпе совхозсенче ку таранччен те йӗркелесе ҫитерейменнине тепӗр хут хыттӑн асӑрхаттарчӗҫ. Партипе правительство вӑрлӑх участокӗсене вырӑна тухса тӗрӗслеме тата ҫав участоксем ҫинчи тырра вӑхӑтра вырса пуҫтарма хушрӗҫ.

Колхозсемпе совхозсем вӑрлӑх фончӗсене пӗтӗмпех хывиччен вӑрлӑх участокӗсенчен пухса илнӗ тырпула, вӑрлӑхлӑх хӑварнисӗр пуҫне, мӗнле те пулин урӑх ҫӗре яма пултараймаҫҫӗ. Вӑрлӑх участокӗнчен пухса илнӗ тырпула вырӑнсӑр салатнӑшӑн айӑплӑ ҫынсене уголовнӑй йӗркепе ответ тыттараҫҫӗ.

Уйӑрӑм вырӑнсенче ҫанталӑка пула вӑрлӑх участокӗсем ҫинче тырпул начар пулнӑ пулсан, ҫавӑнпа вӑрлӑх ҫитеймест пулсан, кашни тӗслӗхрех райисполком уйӑрӑмӑн ҫирӗплетнӗ тӑрӑх, тырӑ тухӑҫлӑрах пулнӑ вырӑнсенчен вӑрлӑх участокӗсем уйӑрса илмелле. Вӑрлӑх участокӗсене ҫакӑн пек уйӑрса илессине тивӗҫлӗ культурӑсене пухма тытӑниччен 10 кунран кая юлмасӑр тумалла.

Вӑрлӑх участокӗсенчи тырпула вӑхӑтра тата пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртсе, ҫителӗклӗ таран вӑрлӑх хатӗрлесе хурасси —кашни колхозӑн хисеплӗ те ответлӑ задачи пулса тӑрать.

СССР Совнаркомӗн «Тӗштырӑ культурисен вӑрлӑхне акса тӑвас ӗҫе лайӑхлатасси ҫинчен» йышӑннӑ постановленийӗ тӑрӑх, пирӗн республикӑри колхозсем 1945—1946 ҫулсем хушшинче кӗрхи тырӑ культурисен тепӗр ҫула куҫакан вӑрлӑх фондне тумалла. Кӗрхи тырӑ культурисен килес ҫула куҫакан вӑрлӑх фондне сортлӑ вӑрлӑх участокӗсенчен пухса илнӗ тырпултан, колхозсемпе совхозсем государство умӗнчи хӑйсен обязательствисене парса татнӑ хыҫҫӑн, хывса хӑвармалла.

Вӑрлӑх участокӗсенчен лайӑх пиҫсе ҫитнӗ тата вӑхӑтра пухса илнӗ тырра уяр ҫанталӑкра ҫапса пухмалла, ӑна хунӑ амбарсене вут-кӑвартан тата йӗпе-сапаран уйӑрмах хытӑ сыхламалла.

Вӑрлӑх участокӗсенчен пухса илнӗ тырӑшӑн кашни колхозрах ответлӑха правленин пӗр-пӗр членӗ ҫине хумалла. Районри ҫӗрӗҫ пайӗн агрономӗсем, уйӑрӑмах агроном-семеноводсем, колхозсенче вӑрлӑха мӗнле сыхласа усранине вӑхӑтран вӑхӑта тӗрӗслесе тӑмалла.

Райисполкомпа ВКП(б) райкомӗн колхозсенчи представителӗсен вӑрлӑх участокӗ ҫинчи тырпула вӑхӑтра пухса кӗртнипе, пухса илнӗ тырра мӗнле сыхласа усранипе яланах пысӑк ӗҫ вырӑнне хурса контроллесе тӑмалла.

Лайӑх вӑрлӑхшӑн кӗрешни—пысӑк тухӑҫлӑ тырпулшӑн кӗрешни пулать. Ҫакна асра тытса, кашни колхозрах чи лайӑх вӑрлӑх хатӗрлессишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлемелле, вӑрлӑх участокӗсем ҫинчен тырпул пухса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен бригадӑсемпе звено членӗсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑрту сарса ямалла.

Кӑҫал кӗрхи тырӑсене чи лайӑх вӑрлӑхпа акса, килес ҫулхи вӑйлӑ тырпулӑн ҫирӗп никӗсне хывса хӑварар, хамӑрӑн социализмлӑ государствӑн ҫарпа экономика хӑватне татах та ытларах тӗреклетес тесе, ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлер!

Ҫитменлӗхсене малтанхи кунсенчех пӗтермелле

СОВЕТСКОЕ, августӑн 7-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсен уйхирӗсенче хӳхӗм тырпул ҫитӗнчӗ. Ӑнса пулнӑ тырпула вӑхӑтра тата тӑккаламасӑр пухса кӗртес тесе, нумай колхозсем ҫак ответлӑ ӗҫе пур енчен те лайӑх хатӗрленсе кӗтсе илчӗҫ.

Нумай колхозсем ыраша суйласа вырма тытӑнчӗҫ. «Прогресс», «Комбайн», «Хастар» колхозсем, ҫавӑн пекех Володарский, Мичурин, Ворошилов ячӗсемпе тӑракан колхозсем иккӗмӗш кун ыраша суйласа выраҫҫӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем, Ҫӗнтерӳ ячӗпе пыракан ӑмӑртӑва хутшӑнса, хӑйсене ӗҫлеме уйӑрса панӑ участоксенче кӑнтӑрла та ҫӗрле те ӗҫлеҫҫӗ. Асӑннӑ колхозсенче кашниййӗнчех пӗрлешӳллӗ столовӑйсемпе ача яслисем организациленӗ. Столовӑйсенче ӗҫлеме пултаруллӑ колхозницӑсене уйӑрнӑ, вӗсем апата колхозниксем ӗҫленӗ ҫӗрех илсе тухма шутлаҫҫӗ.

Анчах та районра тырпул пухса кӗртме васкаман, тырӑсем пӗтӗм уйхирӗнех пуласса кӗтекен колхозсем те пур-ха. Кивӗ Тинкеш. Ваҫкасси. Якаткасси ял Совечӗсене кӗрекен колхозсем ҫак вӑхӑта ҫитсе те ыраш вырма тытӑнман. Вӗсем: ыраш симӗс-ха, тесе лӑпланса лараҫҫӗ. «Клевер», «Победа», Степан Разин ячӗпе тӑракан колхозсенче ыраш вырма тухсан малтанхи кунах ҫитменлӗхсем палӑрчӗҫ. Кунта уйӑрӑм сдельщинӑпа мар, пурте пӗрле ӗҫлеҫҫӗ, ҫавна май кам мӗн чухлӗ вырни тата ӗҫе мӗнле пахалӑхпа туни те паллӑ мар. Уйхире организованно тухмаҫҫӗ; хӑшпӗр колхозниксем ирех тухаҫҫӗ, теприсем вара кӑнтӑрла ҫитес чухне кӑна ӗҫе тытӑнаҫҫӗ. Столовӑйсемпе яслисем организацилемен. Машинӑсемпе вырма шутламаҫҫӗ те. Витнӗ итемсене юсаса пӗтермен. Ҫак ҫитменлӗхсем пурте тырпул пухса кӗме ҫителӗклӗ хатӗрленменнинчен килеҫҫӗ, вӗсене кӗске вӑхӑтрах пӗтерессишӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешмелле.

Янов СИГАЙ.

МТС коллективӗ ӑмӑртӑва хутшӑнчӗ

Йӗпреҫ МТС-ӗнче ҫак кунсенче комбайнерсемпе трактористсен пухӑвӗ пулса иртрӗ. Вӑл пухура Саратов облаҫӗнчи Надеждинск МТС коллективӗ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва организацилеме чӗнсе каланине сӳтсе яврӗҫ. МТС коллективӗ ҫак чаплӑ пуҫарӑва ырласа, аслӑ Ҫӗнтерӳ ячӗпе пыракан ӑмӑртӑва хутшӑнма йышӑнчӗ тата хӑй ҫине таткӑлӑ обязательствӑсем илчӗ.

МТС-ӑн кашни тракторӗпе, комбайнӗпе тата ытти машинӗсемпе туллин усӑ курмалла. Тырӑ вырнӑ вӑхӑтра «Коммунар» комбайнпа 250 гектартан кая мар вырса пухмалла.

МТС ӗҫлесе паракан пур колхозсенче те тӗштырра 20 ӗҫ кунӗнче пухса кӗртмелле. Тракторсемпе ӗҫленӗшӗн илмелли натуроплатӑна ноябрӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр пӗтӗмӗшпех пухса пӗтермелле. Кӗрхи тырра 15 ӗҫ кунӗнче акса пӗтермелле, октябрӗн 20-мӗшӗччен кӗрхи ҫӗртме туса пӗтермелле.

Комбайнсем халӗ пурте колхозсене — ӗҫ вырӑнне ҫитнӗ. Комбайнерсемпе трактористсем хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑна пурнӑҫлассишӗн пикенсе ӗҫлеҫҫӗ.

М. МАРКОВ.

Кӑҫал нихҫанхинчен те тимлӗрех ӗҫлӗпӗр

КАЛИНИНО. Районри колхозсенчен нумайӗшӗ ҫак кунсенче ыраш вырма тухрӗҫ. Пулса ҫитнӗ вырӑнсене суйласа илсе, хӑшпӗр колхозсем чылай пысӑк лаптӑксемех вырса ҫӗмеле хывнӑ.

Мӑн Явӑшри Ленин ячӗпе тӑракан, Ҫӗньял Явӑшри «Ҫӗнӗ ял» колхозсем тырпул пухса кӗртме начар мар хатӗрленсе тухрӗҫ. Ҫак колхозсенче уйӑрӑм сдельщинӑпа ӗҫлеҫҫӗ.

«Ҫӗнӗ ял» колхоз тырӑ вырма, ҫапма, государствӑна тырӑ леҫме кирлӗ пулакан ӗҫхатӗрӗсене, урапасемпе машинӑсене, сӗрмелли япаласене ҫителӗклӗ таран хатӗрлесе хунӑ. Иртнӗ ҫулхи ҫитменлӗхсене асра тытса, колхоз кӑҫал ӗҫ вӑйне ҫирӗп план тӑрӑх вырнаҫтарса тухрӗ. Кунта партипе правительство постановленине пур колхозниксене те тӗплӗн ӑнлантарса панӑ.

— Вӑрҫӑ пынӑ ҫулсенче те эпир тырпула пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗнӗ. Халӗ, чаплӑ фронтовиксем килӗсене ҫӗнтерӳ туса таврӑннӑ вӑхӑтра, эпир пушшех тимлӗрех ӗҫлӗпӗр, — теҫҫӗ фронтовик С. Филиппов ертсе пыракан 2-мӗш бригадӑри колхозниксем.

Фронтовиксене кунта чи ответлӑ ӗҫсене вырнаҫтарнӑ. Берлин хулинчен ҫак кунсенче «Ҫӗнӗ ял» колхоза Д. Федоров таврӑнчӗ. Вӑрҫа кайиччен вӑл колхозри чи паллӑ стахановецсенчен пӗри пулнӑ. Халӗ ӑна ответлӑ ӗҫ хушрӗҫ. Вӑл авӑн ҫапнӑ ҫӗрте весовщик пулса ӗҫлет. Колхозӑн кашни пӗрчӗ тыррине тӗрӗс шута илсе, лайӑх тасатнӑ, типӗ амбарсене хураҫҫӗ. Федоровпа пӗрле тата виҫӗ весовщик. Вӗсем пурте фронтовиксем.

Колхоз тырӑ вырма тухсан пилӗкмӗш куннех авӑн ҫапса государствӑна тырӑ леҫме тытӑнать. Халӗ витнӗ итемсем, молотилкӑсем пурте хатӗр. Государствӑна тырӑ леҫме транспорт бригади организациленӗ, ӑна михӗсем ҫителӗклӗ тупса панӑ.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Хӗрӳллӗ тапхӑр пуҫланчӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). «Малалла» колхозра колхозниксен пухӑвӗ пулса иртрӗ. Вӗсем Ҫӗнтерӳ ячӗпе пыракан ӑмӑртӑва хутшӑнасси ҫинчен сӳтсе яврӗҫ. Вӑрнарсем тата Воронеж облаҫӗнчи Ильич ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксем тырпул пухса кӗртес ӗҫре социализмлӑ ӑмӑрту сарса чӗнсе каланине пӗр кӑмӑллӑ пулса ырларӗҫ. Колхозниксем тырпул пухса кӗртмелли ӗҫ планне тепӗр хут пӑхса тухрӗҫ. Колхозӑн 581 гектар тырпул пухса кӗртмелле. 2 косилкӑпа, 1 жнейкӑпа усӑ курмалла, унсӑр пуҫне 40 ҫын кӗреплеллӗ ҫавапа ҫулаҫҫӗ. Пурӗ тырпул пухса кӗртес ӗҫе 165 ҫын хутшӑнать, вӗсен шутӗнче: ватӑ ҫынсем, подростоксем, учительсем тата шкул ачисем пур. Пур ӗҫе те уйӑрӑм сдельщинӑпа, пӗчӗк ушкӑнсемпе ӗҫлеҫҫӗ.

Колхоз тырӑ вырма тухаччен 180 тонна силос хывма тата витнӗ итемсене юсама 40 ҫынна ытла явӑҫтарнӑ. Вӗсем хӑйсене панӑ задание ӑнӑҫлӑ пурнӑҫланӑ.

Колхозниксене кунне икӗ хутчен вӗри апат ҫитереҫҫӗ, ачасене валли ясли пур.

Колхоз халӗ ыраша суйласа вырма тытӑнчӗ. Колхозниксем тырӑ вырма ирхине 4 сехетре тытӑнаҫҫӗ, каҫхине 10 сехетре ӗҫрен кӗреҫҫӗ.

С. ШАДИН.

Малта пыракан колхозра

ОКТЯБРЬСКОЕ, августӑн 2-мӗшӗ. (Телефонпа). Шӗнерти Тимошенко ячӗпе тӑракан колхоз тырпул пухса кӗртме пур енчен те хатӗрленсе ҫитнӗ. Колхоз 2 жнейка, 2 молотилка тата 18 стан урапа юсаттарнӑ, 28 вӗрен, 25 тилхепе явтарнӑ. Тырпул хумалли складсене ҫуса тасатнӑ. Икӗ бригада та авӑн ҫапмалли итемсем хырса тасатнӑ. 1-мӗш бригада ҫак кунсенче витнӗ итем туса пӗтерчӗ. Тырпул пухса кӗртнӗ вӑхӑтра машина пайӗсене тата урапасене сӗрме 5 центнер тикӗт, центнер ытларах автол илсе хатӗрленӗ.

Колхоз тырпул пухса кӗртмелли ӗҫ планӗ туса ҫирӗплетнӗ. Илан тӑрӑх ыраша 8 ӗҫ кунӗнче, ҫурхи тырӑсене 12 ӗҫ кунӗнче пухса кӗртме палӑртнӑ.

Колхозра тырпул пухса кӗртес ӗҫре 6 вӑкӑр ӗҫлемелле. Вӗсем валли кӳлмелли хатӗрсем ҫӗнӗрен туса хатӗрленӗ. Кирилл Петровпа Иван Кириллов колхозниксем вӑкӑрсемпе ӗҫлесе, кулленхи ӗҫ нормине 100—120 процент тултарма пулаҫҫӗ.

Колхоз председателӗ коммунист Павел Васильев колхозра большевикла йӗркелӗх тӑвассишӗн кӗрешет. Вӑл колхозри пӗтӗм ӗҫе партипе правительство постановленийӗсемпе таччӑн ҫыхӑнтарса туса пырать. 1944 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн вӗҫленӗшӗн ӑна СССР Верховный Совет Президиумӗ «Хисеп палли» орден парса наградӑларӗ.

Ник. АНДРЕЕВ.

Государствӑна тырӑ параҫҫӗ

ЕТӖРНЕ, августӑн 7-мӗшӗ. (Телефонпа). Вӑрнар районӗнчи колхоз председателӗсем, МТС-па хатӗрлев организацийӗсен работникӗсем тата Воронеж облаҫӗнчи Ильич ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксем чӗнсе каланине сӳтсе явнӑ хыҫҫӑн, районри хӑшпӗр колхозсем кивӗ тырра государствӑна параҫҫӗ. Паянхи куна «Победитель» колхоз 11 центнер сӗлӗ, 17 центнер ыраш, Буденный ячӗпе тӑракан колхоз 28,8 центнер сӗлӗ, 29,5 центнер ыраш панӑ. Колхозсенчен пыракан тырра «Заготзерно» склачӗсенче хӑвӑрт йышӑнаҫҫӗ. Ыраш илме 7 склад хатӗрлесе хунӑ, тарасасем ҫителӗклӗ, тырӑ йышӑнакансем хӑйсен ӗҫне лайӑх тӑваҫҫӗ.

И. ЩЕПЕТОВ.

6 авӑн тунӑ

Кӑҫал ҫанталӑк ҫумӑрлӑ пулни авӑн ҫапас ӗҫе чӑрмантарма пултарать. Ҫакна шута илсе, Ишлей районӗнчи «Новая жизнь» колхоз кӗлте типӗтме 6 авӑн турӗ.

Авӑн тӑвас ӗҫе ватӑ колхозниксем А. Захаровпа, М. Филиппов юлташсем ертсе пычӗҫ.

Н. НИКИФОРОВ.

Виҫӗ аслӑ державӑн Берлинри конференцийӗ ҫинчен пӗлтернине сӳтсе яваҫҫӗ

КУКЕҪ, августӑн 7-мӗшӗ. (Телефонпа). Республикӑра тухакан «Чӑваш Коммуни» тата «Красная Чувашия» хаҫатсене илсенех виҫӗ державӑн Берлинри конференцийӗ ҫинчен пӗлтернине сӳтсе явас тӗлӗшпе парткабинетра районри агитаторсен семинарӗ пулса иртрӗ. Семинар хыҫҫӑн Берлинри конференци решенийӗсене ӑнлантарса пама партипе совет активӗнчен 24 ҫын района тухса кайрӗ. Кунсӑр пуҫне, районри ялсене Шупашкар хулинчен 10 агитатор килчӗ. Вӗсем виҫӗ аслӑ державӑн Берлинри конференцийӗн решенийӗсене «Пионер» колхозра, Каганович ячӗпе тӑракан тата Свердлов ячӗпе тӑракан колхозсенче ӑнлантарса панӑ. Колхозниксем Берлинри конференцин историллӗ решенийӗсене ырлаҫҫӗ, тырпула кӗске срокра тата пӗр тӑккаламасӑр пуҫтарса кӗртме, малтанхи таса тырра государствӑна леҫсе пама пулаҫҫӗ.

Виҫӗ аслӑ державӑн Берлинри конференцин решенийӗсене ҫавӑн пекех Шӑнкас ялсоветӗнчи «Чембек» тата «Шӑнкас» колхозсенче те тӗплӗн сӳтсе явнӑ. Ку колхозсем иртнӗ вырсарникун пиҫсе ҫитнӗ тырра суйласа вырма тытӑнчӗҫ. Халӗ кунта тырӑ вырас ӗҫ хӗрсе пырать. Агитаторсем, колхозниксем ӗҫленӗ ҫӗрте пулса, кулленех ҫӗнӗ хаҫатсем вуласа параҫҫӗ, тӗнчери лару-тӑрупа паллаштараҫҫӗ.

П. ФИЛАРЕТОВ,
ВКП(б) райкомӗн ҫарӗҫ отдел заведующийӗ.

Савӑнӑҫлӑ ӗҫлеҫҫӗ

ВӐРМАР, августӑн 7-мӗшӗ. (Телефонпа). Виҫӗ аслӑ держава руководителӗсен Берлинри конференцийӗ ҫинчен пӗлтернине пирӗн районри колхозниксемпе колхозницӑсем, рабочисемпе служащисем пысӑк савӑнӑҫпа кӗтсе илчӗҫ.

Ӗнер район центрӗнчи учрежденисенче ӗҫлекенсен канашлӑвне ирттертӗмӗр. Халӗ канашлу участникӗсем, пурӗ 28 ҫын, колхозсене тухса карӗҫ. Вӗсем Берлинри конференци ҫинчен пӗлтернине колхозниксене ӑнлантарса параҫҫӗ. Паянхи куна 45 колхозра пухусем ирттернӗ. Пухусем хиртех, тырӑ вырнӑ ҫӗртех иртеҫҫӗ. Вӗсем «Новая жизнь», «Красные Шигали», «Свобода», «Заря» колхозсенче пысӑк ҫӗкленӳпе иртнӗ.

Кунта колхозниксем кӑнтӑрла та, ҫӗрле те хирте ӗҫлеме пулнӑ. Ӗҫ тухӑҫлӑхне татах ӳстерес тесе, ӗҫленӗ ҫӗртех апатланассине организацилеҫҫӗ.

Фрунзе ячӗпе тӑракан колхозра Берлинри конференци ӗҫӗсем ҫинчен ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн колхозниксемпе колхозницӑсем кӗрхи тырра 5 ӗҫ кунӗнче, ҫурхи тырӑсене 9 ӗҫ кунӗнче вырса пухма, государствӑна тырӑ парассине октябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне вӗҫлеме йышӑнчӗҫ. Паянхи куна 48 колхозра ыраш вырас ӗҫ хӗрӳллӗн пырать. Ӗнерхи кун тӗлне 114 гектар ыраш вырса ҫӗмеле хывнӑ.

А. СМИРНОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Тухӑҫларах ӗҫлеме пулчӗҫ

Виҫӗ аслӑ державӑн Берлинри конференцийӗ ҫинчен пӗлтернине сӳтсе явас майпа ӗнер пир-авӑр фабрикинчи 1-мӗш сменӑра ӗҫлекенсен митингӗ пулса иртрӗ.

Митинга фабрикӑри парторганизаци секретарӗ Кошевер юлташ уҫрӗ.

— Виҫӗ державӑн Берлинри конференци решенийӗсем, — терӗ вӑл,—пире ҫирӗп мир туса хума май параҫҫӗ. Ҫав историллӗ решенисем аслӑ державӑсем хушшинчи туслӑха татах та ытларах вӑйлатарӗҫ.

Митингра тухса каланӑ пир тӗртекен мастер Панова юлташ хӑйӗн ӗҫ тухӑҫлӑхне 2—3 хут ӳстерме, пир-авӑр тӗртмелли плана ытлашшипех тултарса пыма сӑмах пачӗ.

Ҫавӑн пекех митингра фабрикӑри ватерщица Булькова юлташ тата ытти работниксем те чылайӗшӗ тухса каларӗҫ. Вӗсем пурте малашне татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме пулчӗҫ.

ХӖРЛӖ ҪАРТАН ТАВРӐНАКАНСЕНЕ НАЛОГСЕМ ТӖЛӖШПЕ ПАНА ҪӐМӐЛЛӐХСЕМ

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ постановлени йышӑннӑ. Ҫав постановленире налогсем тӗлӗшпе паракан ҫӑмӑллӑхсем Хӗрлӗ Ҫартан таврӑнакансемшӗн тата вӗсен семйисен членӗсемшӗн ҫаплипех юлни ҫинчен каланӑ.

Хӗрлӗ Ҫартан таврӑнакансен хуҫалӑхӗсене 1945-мӗш ҫулта ялхуҫалӑх тӗлӗшпе паракан ҫӑмӑллӑхсем, вӗсем Хӗрлӗ Ҫартан таврӑниччен усӑ курнӑскерсем, ҫаплипех юлнӑ.

Хӗрлӗ Ҫартан таврӑнакансем 1945 ҫулта вӑрҫӑ налогне тӳлемеҫҫӗ. Вӗсен семйисен членӗсем вӑрҫӑ налогӗ тӗлӗшпе паракан ҫӑмӑллӑхсемпе, ҫар ҫыннисем Хӗрлӗ Ҫартан таврӑниччен усӑ курнӑскерсемпе, кӑҫал та ҫаплипех усӑ кураҫҫӗ.

Авланман, качча кайман, пӗччен пурӑнакан тата пӗчӗк семьеллӗ ҫынсенчен илекен налог тӗлӗшпе Хӗрлӗ Ҫартан таврӑнакансем тата вӗсен арӑмӗсем Хӗрлӗ Ҫартан таврӑннӑ хыҫҫӑн пӗр ҫулталӑк хушши ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ кураҫҫӗ.

(ТАСС).

СССР орденӗсемпе медалӗсене пани

Иртнӗ кунсенче Шупашкар хулинче СССР Верховный Совет депутачӗ, Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. А. Андреева юлташ, СССР Верховный Совет Президиумӗ хушнипе, Чӑваш АССР-ӗн ялхуҫалӑхне, промышленноҫне, культурипе искусствине аталантарас тӗлӗшпе ҫитӗнӳсем тунӑшӑн Чӑваш АССР-ӗ 25 ҫул тултарнӑ ятпа наградӑланӑ работниксене ССР Союзӗн орденӗсемпе медалӗсене пачӗ.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн пӗрремӗш секретарӗ Н. М. Чарыков юлташ Ленин орденӗ илчӗ. Орден илнӗ чухне вӑл ҫапла каларӗ:

— Юлташсем, мана ҫакӑн пек пысӑк награда панӑшӑн эпӗ чи малтанах хама пӑхса ҫитӗнтернӗ большевиксен партине, партин Центральный Комитетне, халӑхсен ҫулпуҫне Совет Союзӗн Генералиссимусне аслӑ Сталина тав тӑватӑп.

Ҫак награда пире, юлташсем, татах та тимлӗрех ӗҫлеме хушать. Чи малтанах, халӗ ялхуҫалӑх ӗҫӗн чи ответлӑ тапхӑрӗ — тырпул пухса кӗртесси, авӑн ҫапасси, государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем парасси, кӗраки—сывлӑхарса килет. СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ тырпул пухса кӗртес тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлес тӗлӗшпе панӑ заданисене пирӗн вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртмелле.

Пирӗн республикӑри парти организацийӗ хӑй умӗнче тӑракан задачӑсене, Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пекех, ӑнӑҫлӑн татса парассине эпӗ шанса тӑратӑп.

Унтан ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн иккӗмӗш секретарӗ Т. А. Ахазов юлташ, Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн главнӑй агрономӗ А. М. Беляев юлташ, ӗҫҫынни депутачӗсен Сӗнтӗр райсовет исполкомӗн председателӗ И. Е. Свешников юлташ Ленин орденӗ илчӗҫ.

Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденне—22 ҫын, «Хисеп Палли» орденне—31 ҫын, «Ӗҫри хастарлӑхшӑн» медале—18 ҫын, «Ӗҫре палӑрнӑшӑн» медале—23 ҫын илчӗҫ.

Награда илекенсем хӑйсене пысӑк награда панӑшӑн партие, правительствӑна тата Сталин юлташа тав турӗҫ, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыва малалла чечеклентерес тесе, татах та ытларах вӑй хурса ӗҫлеме сӑмах пачӗҫ.

Юлашкинчен З. А. Андреева юлташ, награда илнисене саламласа, ҫапла каларӗ:

— Чӑваш АССР-ӗ 25 ҫул тултарнӑ ятпа пирӗн республикӑри 303 ҫынна наградӑланӑ. Ҫак награда пире пурсӑмӑра та татах та лайӑхрах ӗҫлеме, хамӑрӑн республикӑн экономикине ӳстерме, промышленноҫа аталантарма, вӑйлӑрах тырпул туса илме, хамӑрӑн халӑхӑн культурине вӑйлатса пыма хушать.

Ленин—Сталин партийӗ ертсе пынипе, аслӑ вырӑс халӑхӗ пулӑшнипе, чӑваш халӑхӗ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци хыҫҫӑн ҫӗкленсе, ирӗккӗн те туллин сывлама тытӑнчӗ, хаваслӑ ҫӗнӗ пурнӑҫ тума пуҫларӗ. Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пирӗн халӑх Октябрьте ҫӗнтерсе илнисене хӑйӗн кӑкӑрӗпе хӳтӗлерӗ. Мирлӗ строительство тапхӑрӗнче те пирӗн халӑх Тӑван ҫӗршыва, Совет Правительствине тата аслӑ ҫулпуҫа Сталин юлташа чӗререн парӑнса, ҫавӑн пекех тӑрӑшса ӗҫлӗ. Сире малашне те ӑнӑҫлӑн ӗҫлеме сывлӑх сунатӑп.

ЧИ КӖСКЕ ТЕ ЛАЙӐХ КАЛАВ КОНКУРСӖ

ВЛКСМ Центральный Комитечӗ чи кӗске те лайӑх калав конкурсне ирттересси ҫинчен постановлени йышӑннӑ. Калавсем чӗрӗк листаран пуҫласа ҫур пичетлӗ листана ҫити пулмалла. Калавсен темисем хальхи пурнӑҫпа ҫыхӑнса тӑмалла, ҫамрӑксене коммунистла воспитани парас задачӑсене пӑхӑнса тӑмалла.

Конкурса тӑратнӑ чи лайӑх калавсемшӗн ҫакӑн пек виҫӗ премии памалла тунӑ: 15 пин тенкӗлӗх пӗр премии, 8-шар пин тенкӗлӗх—2 премии, 4-шар пин тенкӗлӗх—3 премии. Премисене икӗ хут параҫҫӗ: 1945 ҫулхи октябрӗн 15-мӗшӗнче тата 1946 ҫулхи январӗн 15-мӗшӗнче.

Конкурс жюрине ҫакӑ кӗреҫҫӗ: Н. С. Тихонов, В. Н. Ильенков, В. Кожевников, Б. С. Бурков, М. И. Котов, В. С. Перцов, В. В. Жданов, С. К. Крушинский.

Алҫырусене 1946 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗччен илеҫҫӗ. Премиленӗ калавсене «Комсомольская Правда» хаҫатра пичетлеҫҫӗ, вӗсемшӗн пысӑк гонорар тӳлеҫҫӗ. (ТАСС).

Колхозӑн ӳсӗм ҫулӗ

«Ҫӗнӗ Юнга» колхоз членӗсем хӑйсен колхозӗ 15 ҫул тултарнине паллӑ турӗҫ. Чӑваш ҫӗршывӗнчи мӗнпур ытти ялсем пекех, тӗттӗм те чухӑн пулнӑ ку ял. Ваттисем каласа панӑ тӑрӑх, патша саманинче ялти 50 хуҫалӑхран ҫурри ытла хура пӳртре пӑчӑхса пурӑннӑ. Ҫав 50 хуҫалӑха вара 7—8 ҫӗрме пуян пусмӑрласа пурӑннӑ.

Ялти халӑхӑн культурӑлӑхӗ ҫинчен аса илме те хӑрушӑ. Пӗтӗм ялӗпе те 3—4 мунчаран ытла пулман. Таврари 7—8 ял валли пӗр пуҫламӗш шкул пулнӑ. Ҫапла вара, шкул ҫулне ҫитнӗ ачасенчен 70—80 процентӗ вӗренме пултарайман.

Ялӑн сӑн-сӑпатне халь ӗлӗкхипе танлаштарма та май ҫук. Тӳп-тӳрӗ аплӑ урам варрипе 3—4 рет йӑмра тата ытти йывӑҫсем лартса тухнӑ. Урамӑн икӗ енӗпе хитре, типтерлӗ пӳртсем йӗркипе ларса тухнӑ. Яла пырса кӗрсенех кунта культурӑллӑ та пуян пурнӑҫ вӗресе тӑнине, ялта хастарлӑ та ӗҫчен хресченсем пурӑннине туятӑн.

Ялта пӗтӗмпе 72 хуҫалӑх, вӗсем пурте колхозра пӗрлешсе тӑраҫҫӗ. Колхоз тунӑранпа 15 ҫул хушшинче 30 хуҫалӑх ытла ӗне туяннӑ, вӗсенчен 9 хуҫалӑхне колхоз вӑйӗпе илсе панӑ. 11 хуҫалӑха колхоз ҫурт лартса панӑ. Хальхи вӑхӑтра кунта ӗнесӗр колхозник пӗрре те ҫук. Кашни колхозник килӗнче самовар. 31 килте ҫӗвӗ машини, кашни 2—3 кил валли пӗр мунча пур. Ҫаксем ӗнтӗ кунти ял ҫыннисен культурӑлӑхӗ мӗн тери ӳснине аван кӑтартса параҫҫӗ.

«Ҫӗнӗ Юнга» колхоз чи малтанхи ҫултан пуҫласах вӑйлӑ тырпул туса илет. Хӑшпӗр ҫулсенче кунта ӗҫкунӗ пуҫне 7—8-шар килограмм тырӑ валеҫсе панӑ. Ахальтен мар колхоза Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкин Хисеп кӗнеки ҫине кӗртнӗ. Юлашки вунӑ ҫул хушшинче колхоз ҫулсеренех гектартан 15—17-шер центнертан кая тырӑ туса илмен.

«Ҫӗнӗ Юнга» колхоз вӑйлӑ тырпул туса илнипе ҫеҫ мар, тата хӑйӗн йышлӑ та тухӑҫлӑ выльӑх-чӗрлӗхӗпе те мухтанма пултарать. Кунти сысна фермине республикипе пӗлеҫҫӗ. Сысна ферми Пӗтӗм Союзри ялхуҫалӑх выставкин участникӗ пулнӑ. 1936—1937 ҫулсенче кашни амаран 18-шар сысна ҫури илсе пӑхса ҫитӗнтернӗ. Вӗсене Ф. Вазикова колхозница пӑхса ҫитӗнтернӗ. Ҫак фермӑра вӑл 11 ҫул хушши ӗҫлет. Фермӑра ӗҫлеме пуҫланӑранпа Вазикова юлташ 1000 сысна ҫури ытла пӑхса ҫитӗнтернӗ. Правительство унӑн ӗҫне тивӗҫлипе хакласа Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑларӗ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче фронта кайнӑ арҫынсем вырӑнне хӗрарӑмсем ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Хальхи вӑхӑтра колхозра ертсе пыракан пур вырӑнсенче те хӗрарӑмсем ӗҫлеҫҫӗ.

Татьяна Ванюшкина вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче виҫӗ ҫула яхӑн бригадир пулса ӗҫлерӗ. Унӑн бригади пур ӗҫре те яланах малта пычӗ. Бригадирта лайӑх ӗҫленине кура, иртнӗ ҫулхи август уйӑхӗнче ӑна колхоз председательне суйларӗҫ. Колхоза лайӑх йӗркеллӗ ертсе пынӑшӑн Ванюшкина юлташа «Ӗҫре палӑрнӑшӑн» медаль парса наградӑланӑ.

Уйхир ӗҫӗн бригадирӗсем те—хӗрарӑмсем, фермӑра та пур ӗҫре те хӗрарӑмсем. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр условисенче те хӗрарӑмсем «Ҫӗнӗ Юнга» колхозӑн малтанхи чапне ҫухатмарӗҫ. Вӗсем ӗҫри йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе, вӑрҫӑн тӑватӑ ҫулӗ хушшинче ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн туса пычӗҫ. 1941 ҫулта гектартан 17 центнер, 1942 ҫулта 15 центнер тырӑ туса илнӗ. Иртнӗ ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илнӗшӗн колхоза ӗҫҫынни депутачӗсен район Совечӗпе ВКП(б) райкомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне панӑ.

Иртнӗ ҫул «Ҫӗнӗ Юнга» колхоз планран ирттерсе Хӗрлӗ Ҫар фондне 12 пин пӑт тырӑ тата пахчаҫимӗҫсемпе тӗрлӗ продуктсем нумай панӑ. Колхозниксем иртнӗ ҫулта 75 пин, кӑҫал 45 пин тенкӗлӗх заем ҫырӑнса, укҫине ҫийӗнчех тӳлесе татнӑ.

Колхоз кӑҫал та тырпул гектартан 100 пӑтран кая мар туса илме палӑртнӑ.

«Ҫӗнӗ Юнга» колхозӑн 15 ҫул хушшинчи ҫитӗнӗвӗсем пысӑк. Халь татах ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывӑн вӑй-хӑватне ӳстерессишӗн колхозниксемпе колхозницӑсем хастарлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

А. СОЛОВЬЕВ.

СӖНТӖР.

Ăратлă выльăхсене лайăх пăхмалла

Колхозсемпе совхозсенчи выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тесен, чăн малтан выльăхсен ăратлăхне лайăхлатмалла. Ăратлă выльăх—колхозăн ылттăн фончĕ. Партипе правительство выльăхсен хисепне пахалăхне ÿстерес ĕçе ăратлă выльăхсем татса пани пирки пĕр хутчен мар асăрхаттарнă. СССР Совнаркомĕ 1945 çулхи январĕн 8-мĕшĕнче йышăннă постановленипе вырăнти выльăхпа ăратлă выльăхран пĕтĕççе пулнă ĕне-выльăхсене те ăратлă выльăхсене çыракан государство кĕнекине кĕртме хушнă. Ăратлă выльăхсене сутмалли тата илмелли хака çĕнĕрен пăхса тухса çирĕплетнĕ. Çав çĕнĕ хак ăратлă выльăхсем пăхса çитĕнтерме хавхалантарать, ăратлă выльăхсем усракан колхозсене, совхозсене тата ытти хуçалăхсене экономика тĕлĕшпе пысăк тупăш парать. Колхозсемпе совхозсенчи ăратлă выльăхсене тĕрĕс шута илсе пыни выльăхсен чи лайăх йăхне тупма, вĕсен тухăçлăхне ÿстерме пулăшать. Лашасене илсен, вĕсен ăратлăхне тĕрĕс пĕлни вĕсем йывăр ĕç тума пултарнине, вĕсен чăтамлăхне е хытă чупма пултарнине пĕлме май парать. Çапла вара ăратлă выльăхсене тĕрĕс шута илсе пыни выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Ăратлă выльăхсем çитĕнтерес тĕлĕшпе пирĕн республикăри чылай колхозсем паха çитĕнÿсем турĕç. Акă, сăмахран, Улатăр районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозах илер. Çав колхоз ăратлă выльăх ĕрчетес енĕпе ытти колхозсенчен нумай малта тăрать. Кунта юлашки икĕ çул хушшинче пĕр выльăх та вилни, хĕсĕр юлни пулман. Кашни пăрулама пултаракан ĕнерен пăру илнĕ. 1944 çулта кашни сăвакан ĕнерен, вăтам шутпа, 1224 литр сĕт сунă. «Мурка» ятлă çиччĕ пăрулана ĕнерен вара пĕр çулталăкра 3500 литр сĕт илнĕ. Колхозра пур ĕнесем те ăратлă, вĕсене лайăх пăхаççĕ, çавна пула вĕсен тухăçлăхĕ те пысăк.

Вăрнар районĕнчи «Волонтер» колхозра красногорбатовски йăхран пулнă метис ĕнесем усраççĕ. Унта ĕнесене юратса пăхаççĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче ĕнесем е пăрусем вилни пулман. 1944 çулта кашни сăвакан ĕнерен, вĕсене шултăра тата сĕткенлĕ апатпа кăна тăрантарнă пулсан та, планпа пăхнă 1050 литр вырăнне кашни ĕнерен 1250-шар литр сĕт илнĕ. «Волонтер» колхозăн фермине кăтартуллă йĕркелĕх тунă. Ĕнесене тăрантарассине, шăварассине, усăлтарса çÿрессине зоотехниксем кăтартнă пек туса пыраççĕ.

Çĕрпÿ районĕнчи «Новая жизнь» колхозри ăратлă лашасен ферми те кăтартуллă ферма пулса тăрать. Ку колхоз ăратлă ăйăрсем çитĕнтерет. Ытти колхозсене ăратлă ăйăрсем парса, вăл лашасен ăратлăхне лайăхлатас тĕлĕшпе колхозсене калама çук пайлăн пулăшать. Юлашки икĕ çул хушшинче колхоз ытти колхозсене 17 ăратлă ăйăр сутнă. Çав колхозăн çитĕнĕвĕ, чăн малтанах, унта лашасене лайăх пăхнинчен тата тăрăшса ĕçлекен конюхсене закон тăрăх ĕçшĕн хунса тÿлесе пынинчен килнĕ. Фермăра ĕçлекенсем хăйсен ĕçне юрататççĕ кăна мар, пĕлессе те лайăх пĕлеççĕ. Колхоз правленийĕ виçĕ уйăхра пĕрре ферма заведующийĕн тата конюхсен отчетне итлет. Лашасем валли чи лайăх утă, сĕткенлĕ апатсемпе ытти тĕрлĕ апатсем уйăрса хураççĕ, лашасен сывлăхне яланах сăнаса тăраççĕ.

Анчах ăратлă выльăхсене шута илес, лайăх пăхса çитĕнтерес ĕçе хăшпĕр колхозсенче кирлĕ пек туса пымаççĕ-ха. Уйрăм колхозсемпе çĕрĕç органĕсен руководителĕсем ăратлă выльăхсем ĕрчетес тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ.

Выльăхсен шутне колхозниксенчен контрактаци йĕркипе илсе тултараççĕ. Час-часах лайăх вăкăрсене, сысна аçисене, такасене, вĕсен чĕрĕ виçи пысăккине курса, зоотехниксемпе ветеринарсем çав выльăхсем юрăхсăра тухни çинчен актсем çырман пулсан та, аш-какая яраççĕ. Колхоз валли ăратсăр çамрăк аçа выльăхсене хăвараççĕ. Çав вăхăтрах пĕр йăхри аçасене хăварнă тĕслĕхсем те пулнă, çавна пула вара выльăхсен пахалăхĕ, ăратлăхĕ начарланса пырать. Пĕр йăхри аçана чуптарнă хыççăн çамрăк выльăхсем ямшерке те сарăпăлă пулаççĕ, начар çитĕнеççĕ, час-часах вилеççĕ. Районсенчи зоотехниксемпе ветеринарсем çавна асăрхаса тăмаççĕ, пĕр йăхран тухнă аçасемпе амасене чуптарнă хыççăн çамрăк выльăхсем начарланасси çинчен колхозниксене кирлĕ пек ăнлантарса памаççĕ. Çамрăк выльăхсем лайăх çитĕнччĕр тесен, пĕр хуçалăхри аçа выльăха тепĕр хуçалăхри аçа выльăхпа улăштарас пулать.

Ăратлă выльăхсене салатса пĕтерни, чăн малтанах, вĕсене кирлĕ пек шута илсе пыманнинчен, ăратлă выльăхсене çырса пыракан государство кĕнеки çине çырса хуманнинчен, çав выльăхсене кирлĕ пек пăхманнинчен килет. Сăмахран, Вăрмар районĕнчи «Смычка» колхозра шута илнĕ ăратлă выльăхсене пăхассине питĕ начар организациленĕ. Ку колхозра «Волшебница» ятлă сысна ами пур, вăл 1939 çулта çуралнă, ăна ăратлă выльăхсене çырса пыракан кĕнекене те кĕртнĕ. «Волшебницăран» кашни çулах 12—15 çурă илсе пынă. Пилĕк çул хушшинче вăл 70 çурă панă. Анчах çав çурăсене районри лайăх сысна фермисене валеçсе паман. Кăçал «Волшебница» 13 çурă тунă, вĕсене лайăх ... са çитĕнтерсе, кÿршĕри сысна фермисене салатмалла.

Чылай районсенче ăратлă выльăх фермисене ытти фермăсенчен уйăрмаççĕ. Пăрачкав районĕнчи Максим Горький ячĕпе тăракан колхозра, Шăмăршă районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра симментальски ăратлă ĕне фермисене салатса ярас патнех çитерне. Шăмăршă районĕнчи «Кзыл юл» тата Иçлей районĕнчи «Хачики» колхозсенчи ăратлă лаша фермисенче ăратлă лашасем юлманпа пĕрех.

Ăратлă фермăсем начар ĕçленнишĕн, вĕсене юхăнтарса янишĕн чăн малтан колхоз руководителĕсем айăплă. Çавăнпа пĕрлех уншăн ялхуçалăх специалисчĕсем те—уйрăмах зоотехниксем айăплă. Мĕншĕн тесен вĕсем ăратлă выльăхсене шута илмеççĕ, вĕсене уйрăмăн тата лайăхрах пăхассине йĕркелемеççĕ. Хăшпĕр районсенче вара ăратлă выльăхсене государство кĕнеки çине çырса пыма чарăннă. Ăратлă выльăхсене шута илесси, вĕсене пăхасси Çĕрпÿ, Вăрмар, Тăвай тата ытти хăшпĕр районсенче уйрăмах начар тăрать. Шăхасан районĕнче вара ăратлă выльăхсене çырса пыракан государство кĕнекине те çухатнă.

Кашни районрах ăратлă выльăхсене шута илессине йĕркелемелле, вĕсене лайăхрах пăхмалла, ăратлă выльăхсене колхозсем тăрăх пĕлсе вырнаçтармалла тата вĕсемпе туллин усă курмалла.

Ăратлă выльăхсен шутне вырăнти лайăх йăхлă выльăхсене те суйласа илсе кĕртмелле. Кашни ферма валлиех ăратлă аçа выльăх туянас пулать. 1945 çулта план тăрăх пăхнă пур тĕрлĕ выльăхсен ăратлă фермисене те çĕнĕрен йĕркелесе ямалла. Ăратлă выльăхсем кам аллинче пулнине пăхмасăрах, вĕсене çирĕп шута илмелле. Колхозниксенчен колхоз валли контрактаци тăрăх çамрăк выльăх илнĕ чухне яланах ăратлăхне илме тăрăшмалла. Кашни фермăрах лайăх ăратлă аçа е ама выльăхсем пулмалла, вĕсенчен илнĕ çамрăк выльăхсене пурне те упраса хăвармалла тата лайăх пăхмалла.

Ф. ЯКОВЛЕВ.
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн ăратлă выльăхсем ĕрчетес енĕпе ĕçлекен старши инспекторĕ.

Совет Союзĕ Румынипе тата Финляндипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçлать

Августăн 6-мĕшĕнче Союзниксен Румынири Контроль Комисси Председателĕн Заместителĕ И. З. Сусайков генерал-полковник, Совет Правительстви хушнипе, Румыни премьер-министрне Петре Гроза господина заявлени панă. Çав заявленипе Совет Правительстви Румынипе дипломатиллĕ çыхăну пуçласа яма шутлани çинчен тата пĕр-пĕрин патне посланниксем ямалла тăвасси çинчен пĕлтернĕ. Заявленире çакна кăтартса панă: Совет Правительстви çав решение, Румыни гитлерла Германие хирĕç пынă кĕрешĕве 1944 çулхи августăн 23-мĕшĕнчен пуçласа союзниксем майлă активлăн хутшăннине шута илсе, Германие аркатса тăкма Румыни халăхĕ чылай пулăшнине шута илсе, çавăн пекех тата Румыни перемири çинчен тунă килешÿре илнĕ обязательствăсене тÿррĕн пурнăçа кĕртсе пынине шута илсе йышăннă.

Августăн 6-мĕшĕнчех Союзниксен Финляндири Контроль Комиссийĕн Председателĕ А. А. Жданов юлташ, Совет Правительстви хушнипе, Финлянди премьер-министрне Паасикиви господина çавăн пек заявлениех панă. Заявленире çапла каланă: Совет Правительстви çав решение, Финлянди 1944-мĕш çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче тунă перемири килĕшĕвне тÿррĕн пурнăçа кĕртсе пынине, çапла вара гитлерла Германие хирĕç пынă кĕрешÿре союзниксене çитĕнÿсем тума пулăшнине шута илсе, йышăннă.

Совет Правительстви çавăн пек йышăнни çине ответлесе, Румынипе Финлянди правительствисем çав решенипе хăйсем пĕтĕмĕшпех килĕшни тата ăна хапăл туса кĕтсе илни çинчен пĕлтернĕ.

Англи профсоюзĕсен делегацийĕ Совет Союзĕн тата ют çĕршывсен журналисчĕсемпе тĕл пулни

„Труд“ хаçат редакцийĕнче пулса иртнĕ пресс-конференци

Августăн 6-мĕшĕнче «Труд» хаçат редакцийĕнче Англири тимĕр тата хурçă шăратакан промышленноçри рабочисен профсоюзĕн делегацийĕ пресс-конференци туса ирттернĕ. Çав делегаци Совет Союзне СССР-ти хура металлурги рабочийĕсен профсоюзĕн Центральный Комитечĕ чĕннипе килнĕ. Делегацие Англири тимĕрпе хурçă шăратакан промышленноçри рабочисен профсоюзĕн генеральнăй секретарĕн заместителĕ Л. Эванс ертсе пырать. Делегаци составне асăннă союзăн ертсе пыракан работникĕсем Х. Дуглас, Т. Михен тата Англири металлурги завочĕсенче ĕçлекен Дж. Уильям, Х. Дэвей, Э. Робертс тата Дж. Линч рабочисем кĕреççĕ. Делегаци Совет Союзĕнчи чылай металлурги завочĕсене кайса çÿренĕ тата совет профсоюзĕсен ĕçĕсемпе паллашнă.

Совет Союзĕн тата ют çĕршывсен журналисчĕсем панă ыйтусем çине делегаци руководителĕ Л. Эванс ответленĕ. Вăл каланă тăрăх, делегаци Совет Союзне килнин тĕп тĕллевĕ — Совет Союзĕнчи профсоюзсен ĕçĕсемпе паллашасси, вĕсемпе таччăнрах çыхăнасси тата Совет Союзĕнчи юсав ĕçĕсемпе паллашасси пулнă. Пуринчен ытла делегаци Совет Союзĕнчи рабочи-металлистсен пурнăçпа ĕç условийĕсемпе интересленнĕ.

— Эпир,—тенĕ вăл, — чылай металлурги завочĕсенче пултăмăр. Çав заводсем — питĕ чаплă предприятисем, вĕсен техники питĕ паха. Пуринчен ытла Магнитогорскри комбинат чаплăн палăрса тăрать, ун пек завод пирĕн Англире çук. Кунта эпир совет рабочийĕсен ертсе пыракан категорийĕн квалификацийĕ пысăк пулнине палăртрăмăр. Рабочисем хăйсен производствипе питĕ интересленеççĕ. Продукци туса кăларас тĕлĕшпе комбинат ытти çĕршывсенчи çавăн йышши предприятисенчен хăйĕн пахалăхĕпе уйăрăлса тăрать.

Малалла Эванс совет профсоюзĕсем культурăллă-массăллă тата социальнăй страховани ĕçĕсем тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунине палăртнă. Совет Союзĕпе Англири социальнăй системăсем тĕрлĕ пулнă пирки Англипе Совет профсоюзĕсен ĕçĕсен содержанийĕпе меслечĕсем те тĕрлĕ. Англи профсоюзĕсем хăйсен ĕçĕнче,—тенĕ Эванс, пуринчен ытла, ĕçукçи тÿлес тата ĕç условийĕсене лайăхлатас ыйтусем çине çаврăнса пăхаççĕ. Эванс каланă тăрăх, Совет Союзĕнчи предприятисенче делегаци ĕçукçи тĕлĕшне, ĕçре рабочисен сывлăхне сыхлас тата ытти тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисен ĕçĕсемпе çителĕклĕ тăран паллашайман.

Магнитогорскри комбинатăн профсоюз организацийĕ унăн шучĕпе мĕнле ĕçлет тесе ыйтнине хирĕç Эванс çапла ответленĕ: комбинатра пулнă кĕске вăхăт хушшинче делегаци членĕсем профсоюз организацийĕ хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртсе пынине тата рабочисен нушисемшĕн тăрăшнине курчĕç. Профсоюз комитечĕпе администраци таччăн пĕрлешсе ĕçлеççĕ, тенĕ.

Çавăн пекех Эванс рабочисем станоксемпе инструментсене епле тыткалани çинчен, Совет Союзĕнчи предприятисене ĕç вăйĕ тăратни çинчен каласа панă.

Уйрăмăнах Эванс Совет Союзĕнче ачасемшĕн тăрăшнине палăртса хăварнă.

— Пире,—тенĕ вăл,—Совет Союзĕнчи ачасен сывлăхĕшĕн тата ачасене аталантарса воспитани парассишĕн çав тери тăрăшни питĕ тĕлĕнтерчĕ.

Çакăнпа пĕрлех Эванс Совет Союзĕнчи предприятисенче, пĕтĕм халăх хушшинчи пекех, çамрăксен проценчĕ питĕ пысăккине палăртнă.

Ют çĕршыв корреспонденчĕсенчен пĕри панă ыйту çине ответлесе, Эванс çапла каланă: делегаци членĕсем Совет Союзĕнчи рабочисем Англири лару-тăрупа питĕ интересленнине курчĕç. Сăмахран,—тенĕ вăл,—пирĕнтен час-часах лейбористсен правительстви хăйĕн суйлав умĕнхи программипе пурнăçа кĕртме пултарĕ-ши? тесе ыйтатчĕç.

Совет Союзĕнче сывлăх ĕçĕ епле тăни пирки панă ыйту çине ответлесе, Эванс çапла каланă: Совет Союзĕнчи промышленность предприятийĕсенче сывлăха сыхлас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ, тенĕ.

— Эпир,—тенĕ вăл,—заводри поликлиникăсенчен пĕринче пулса куртăмăр. Вăл пире çав тери тĕлĕнтерчĕ. Кунта рабочисене сыватаççĕ çеç мар, профилактика ĕçĕсене туса пыраççĕ, чир-чĕр ересрсинчен те упраççĕ. Англири заводсенче çавăн пек поликлиникăсем çук.

Англипе Совет профсоюзĕсен комитечĕ вăрçă вăхăтĕнче усăллă ĕç тунине палăртса, Эванс вăрçă хыççăнхи условисенче те çав комитет икĕ çĕршыври профсоюзсене усăллă ĕçсем тума пулăшассине шанса тăни çинчен каланă. Англипе Совет профсоюзĕсем пĕрлешсе ĕçлени мире çирĕплетме пулăшса тăрĕ, тенĕ вăл.

Ытти ыйтусем çине ответлесе, Эванс Великобританипе Совет Союзĕнчи уйрăм профсоюзсем пĕр-пĕринпе çыхăну тытни кирлине палăртнă. Сăмахран, эпир Совет Союзĕнчи металлистсен профсоюзĕн представителĕсем Англие пырассине кĕтетпĕр, тенĕ вăл.

Совет Союзĕнче пулнă хыççăн пĕтĕмĕшпе шухăш-кăмăл епле пулни пирки ыйтсан, делегаци членĕ Т. Михен ответ панă. Вăл çапла каланă:

— Совет Союзĕнче пулнă хыççăн пирĕн делегацин шухăш-кăмăлĕ çав тери лайăх. Ку ĕнтĕ эпир мĕн курнисене пĕтĕмнех тивет. Кунта килни çинчен отчет панипе Англири рабочисем питĕ интересленессине эпĕ шанса тăратăп.

Югославири Халăх фрончĕн съезчĕ уçăлнă

БЕЛГРАД, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Югославири Халăх Фрончĕн съезчĕ уçăлнă. Съезда мĕн пурĕ 1.150 делегат пынă. Организациллĕ комитет ячĕпе съезда уçакан Синиша Станкович профессор çапла каланă: оккупантсемпе вĕсен тÿрепкисене хирĕç кĕрешсе пынă çулсенче федерацине кĕрекен Халăх ирĕклĕх фрончĕн организацийĕсем, анлă халăх массисен чăн-чăн интересĕсемшĕн тăраканскерсем, пĕрлĕхлĕ те хăватлă политикăллă вăй пулса тăчĕç. Югославие демократиллĕ тата федерациллĕ çĕршыв тăвас ĕçĕн çĕнĕ задачисем, çĕршыва ура çине тăратас задачăсем çав уйрăм ĕçлекен организацисене пĕрлештерсе, Югославири пĕрлĕхлĕ Халăх фрончĕ, пĕрлĕхлĕ программăпа тата уставпа ĕçлекен организаци туса хума хушаççĕ.

Съезда уçнă хыççăн Халăх фрончĕн Хорватири, Словенири, Черногорири, Сербири, Македонири, Боснири тата Герцеговинăри организацийĕсен представителĕсем саламлă сăмахсем тухса каланă.

Съездăн кун йĕркинче çакăн пек ыйтусем тăраççĕ: 1) Тĕнчери тата шалти политикăллă лару-тăрупа Югославири Халăх фрончĕн задачисем; 2) Халăх фрончĕн программи; 3) Югославири Халăх фрончĕн уставĕ; 4) Югославири Халăх фрончĕн президиумне, секретариатне, исполкомне тата союзлă комитетне суйласси.

ВЕНГРИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ĔÇĔСЕМ

БУДАПЕШТ, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Дьендьеши Янош сĕннĕ тăрăх, Венгрири министрсен совечĕ вăрçă тÿлевĕсен шучĕпе тавар тăратмалли комиссариат туса хурасси çинчен решени йышăннă.

Юстици министрĕ Рис Иштван сĕннипе министрсен совечĕ преступниксем хăйсем çук пулин те судра вĕсен ĕçĕсене пăхса тухма право паракан декрета çирĕплетнĕ. Судсене преступниксем хăйсем çук пулин те вĕсем пирки приговорсем йышăнма ирĕк панă.

ФРАНЦИРИ СОЦИАЛИСТСЕН ПАРТИЙĔН КĔÇĔН ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕМ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔПЕ ПĔРЛЕШЕССИШĔН ТУХСА КАЛАÇÇĔ

ПАРИЖ, августăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Францири социалистсен партийĕн департаментсенчи конференцийĕсенче Францире рабочисен пĕрлĕхлĕ партине туса хурас ыйтăва сÿтсе-явнă. Çак ыйту пирки пынă хĕрÿллĕ прениcенче социалистсен партийĕн руководствипе унăн кĕçĕн организацийĕсем хушшинче пĕрлĕхлĕх сукки палăрнă. «Популер» хаçатра компартипе пĕрлешессине хирĕç кашни кунах статьясем çыракан социалистсен партийĕн лидерĕн Леон Блюмăн шухăшĕпе социалистсен партийĕн кĕçĕн организацийĕсем килĕшмеççĕ. Социалистсен партийĕн департаментсенчи пĕр конференцийĕнче те ку тарана çити коммунистсен партийĕпе пĕрлĕхлĕ пулассине хирĕç тухса калани пулман, чăн та вĕсенчен нумайĕшĕ организациллĕх тĕлĕшпе пĕрлешессине хирĕç тăнисем пулнă.

Социалистсен партийĕн вырăнти организацийĕсенче икĕ парти пĕрлĕхлĕ пулассине хирĕç тăракансем питĕ сахал шутланаççĕ. Лионра тухакан хаçатсем, сăмахран, çапла пĕлтереççĕ: социалистсен партийĕн конференцийĕнче сасăлама виçĕ резолюци тăратнă пулнă. Çав резолюцисенчен пĕринче компартипе пĕрлĕхлĕ пулассине пачах та йышăнмалла мар, тенĕ. Çав резолюцие социалистсен партийĕн ертсе пыракан комитечĕн ку конференцире пулнă членĕ Андре Филипп хÿтĕленĕ, анчах вăл резолюцишĕн 120 сасăран мĕн пурĕ те 8 сасă кăна панă.

Иккĕмĕш резолюцире Францири коммунистсен партийĕн Х-мĕш съездĕнче Дюкло тунă докладра кăларса тăратнă сĕнÿсем тăрăх компартипе пĕтĕмĕшпех пĕрлешмелле, тенĕ. Çав сĕнĕве социалистсен Рона федерацийĕн чылай руководителĕсем тăратнă пулнă. Вĕсем каланă тăрăх, «массăсем пĕрлĕх патне туртăннине шута илмелле», «компартипе пĕрлешессине хирĕç тăни социалистсен партине сылтăмри лагере илсе çитерет». Çак сĕнÿшĕн 26 делегат сасăланă. Социалистсен партийĕн департаментри организацийĕн руководстви сĕннĕ виççĕмĕш резолюцире компартипе федераци никĕсĕ çинче пĕрлешмелле тесе каланине конференцира 86 делегат ырланă. Юлашкинчен ăна комитет председателĕ Андре Филипăн та йышăнма тивнĕ. Конференци çавăн пекех никама пăхăнман учредительнăй пуху туса хумалла тесе йышăннă. Консультаци ассамблейинчи социалистсем малтан хăйсем кăларса тăратнă çав требование йышăнмасăр тăнă.

Вар департаментĕнчи социалистсен организацийĕн конференцийĕ кăçалах компартипе пĕтĕмĕшпех пĕрлешме кирли çинчен пĕр сасăллă пулса резолюци йышăннă.

Социалистсен партийĕн центральнăй органĕ «Популер» хаçат социалистсен партийĕн департаментсенчи конференцийĕсен решенийĕсене пичетлесе кăлармасть.

ÇĔНĔ ЙЫШШИ АТОМ БОМБИ ÇИНЧЕН ТРУМЭН КАЛАСА ПАНИ

ВАШИНГТОН, августăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт Трумэн президент пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре çапла каланă:

«16 сехет каярах Америка самолечĕ японецсен Хонсю утравĕнчи Хиросима ятлă питĕ паха çар бази çине бомба пăрахнă. Çав бомбăн аркатакан вăйĕ сирпĕтсе ямалли 20.000 тонна ялала вăйĕнчен ытларах. Çав çĕнĕ бомбăн аркатакан вăйĕ акăлчансен «Гренд Слем» йышши бомбин, вăрçă историйĕнче хăçан та пулин усă курнă чи шултăра бомбăн вăйĕнчен икĕ пин хут ытларах шутланать».

«1939 çулччен,—тенĕ малалла Трумэн,—ученăйсем атом энергийĕпе усă курма май пулать пулĕ, тесе шутланă. Анчах çав шухăша епле пурнăçа кĕртмеллине никам та пĕлмен. 1942 çулта нимĕçсем, ытти хĕçпăшалсемсĕр пуçне, атом энергийĕпе те усă курас енĕпе тăрăшса ĕçлени çинчен пĕлтĕмĕр эпир. Атом вăйĕпе усă курса вĕсем тĕнчене чуралăха кĕртсе ÿкерме шутланă. Анчах вĕсен ĕçĕ ăнман».

Трумэн малалла çапла каланă: 1942 çул пуçланиччен ехех США тата Англи хăйсен вăрçă валли усăллă наука пĕлĕвĕсене пĕрлештерчĕç. Çав пĕтĕмĕшле политикăпа килĕшсе, атом бомбине тăвас тĕлĕшпе тĕпчев ĕçĕсем пуçланчĕç. Трумэн каланă тăрăх, хальхи вăхăтра США-ра атом энергине туса хатĕрлекен икĕ пысăк завод тата темиçе вакăрах предприяти пур. Атом бомбисем туса кăларас ĕç чи вăйлă аталаннă вăхăтра çав заводсенче 125.000 çын ĕçленĕ пулнă. Хальхи вăхăтра та çав производствăра 65.000 çын ытла ĕçлет. Нумай рабочисем çав заводсенче икĕ çул çурăшар ĕçленĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисем кăна хăйсем мĕн тунине пĕлнĕ.

«Хальхи вăхăтра,—тенĕ Трумэн,—японецсен кирек хăш хулари çĕр айĕнче ĕçлекен предприятине те хăвăрт тата пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкма шутлатпăр. Эпир вĕсен докĕсене, завочĕсемпе коммуникацийĕсене пĕтерсе тăкатпăр. Японин вăрçăри хăватне эпир пĕтĕмпех аркатса тăкасси пирки никам та иккĕленсе ан тăтăр. Июлĕн 26-мĕшĕнче Потсдамра кăларнă ультиматумăн тĕллевĕ—Япони халăхне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкассинчен упраса хăварас тени пулнă. Япони руководителĕсем çав ультиматума питĕ васкаса сирсе пăрахрĕç. Вĕсем хальхи вăхăтра та эпир кăларса тăратнă условисене йышăнмасçĕ пулсан, вĕсен сывлăшран пырса тапăнса çав тери вăйлă аркатса тăкнине, тĕнчере нихăçан курманнине, курма лекĕ. Сывлăшран аталкăланă хыççăн тинĕс-çар тата пехота вăйĕсем çав тери хăватлăн пырса тапăнĕç. Японецсем ку таранччен ун пеккине нихăçан та курман. Вăл атакăсен вăрçă искусстви çав тери вăйлă пулĕ, японецсем унпа паллашнă ĕнтĕ».

Юлашкинчен Трумэн çапла каланă: США-ра атом энергийĕпе усă курмалли тата çав производствăна контроллесе тăмалли комисси тăвас ыйтăва эпĕ конгреса хăвăрт пăхса тухма сĕнетĕп, тенĕ. «Пĕтĕмĕшлĕ мире упраса тăрас ĕçре атом энергийĕ мĕнле хăватлă меслет пулса тăма пултарасси пирки» вăл конгреса малашне сĕнÿсем парасси çинчен пĕлтернĕ.

Тĕнчери лару-тăру

Демократиллĕ виçĕ аслă держава Правительствисен пуçлăхĕсен июлĕн 17-мĕшĕпе августăн 2-мĕшĕнче Берлинра пулса иртнĕ конференцийĕ ăнăçлă вĕçленни çинчен пĕлтернине тĕнчери общественность кăмăллă кĕтсе илчĕ. Çак конференцире йышăннисем пĕтĕм тĕнчипе историллĕ питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем вăрçă хыççăн нацисем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнассин çирĕп никĕсне хывса хăвараççĕ. Çакăн пек пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси халĕ те, ĕлĕкхи пекех, виçĕ аслă державăна çĕнтерÿ патне илсе пынă тата пĕтĕм тĕнчери мирĕн гарантийĕ пулса тăракан пĕрлĕхĕ çинче никĕсленсе тăрать. «Президент Трумэн, Генералиссимус Сталин тата Премьер-министр Эттли виçĕ Правительство хушшинчи çыхăнусене çирĕплетрĕç, вĕсем, килĕшсе ĕçлессине тата пĕр-пĕрне ăнланассине анлăлатнă конференцирен саланнă май, хăйсен Правительствисемпе халăхĕсем, пĕрлешнĕ ытти нацисемпе пĕрле тивĕçлĕ тата çирĕп мир туса хума пултарассине шанса тăраççĕ».

Берлинри конференцире мирĕн малашнехи кунçулĕшĕн питĕ паха нумай ыйтусем пăхса тухнă. Демократиллĕ виçĕ аслă держава Правительствисен пуçлăхĕсемпе вĕсен советникĕсем мĕн тери пысăк ĕç тунине конференцире пăхса тухнă ыйтусене каласа тухни те лайăх кăтартса парать. Ют çĕршыв ĕçĕсен Министрĕсен Советне тăвасси çинчен, Германие гитлерла тупне пăхăнса пымалли политика тата экономика принципĕсем тăвасси çинчен, репарацисем çинчен тата Германи флочĕ çинчен решенисем йышăннă. Конференци Кенигсбергпа ун таврашĕнчи облаçсем çинчен, Австри çинчен, Польша çинчен, мирлĕ договорсем тăвасси çинчен тата Пĕрлешнĕ нацисен организацине ытти государствăсене кĕртесси çинчен тăракан ыйтусем пирки решенисем йышăннă. Çавăн пекех вăл тата территорисем çинчен, Румынири, Болгарири тата Венгрири Союзниксен Контроль Комиссийĕсем çинчен, юлашкинчен, Германи халăхне куçарасси çинчен решенисем йышăннă. Унсăр пуçне, союзниксене интереслентерекен вăрçă ыйтăвĕсем çинчен калаçусем туса ирттернĕ.

Паллах, ĕç конференцире пăхса тухнă ыйтусен хисепĕнче мар, чи малтанах, вĕсен пахалăхĕ тата вĕсене ăнăçлăн татса панинче пулать. Берлинри конференцире çак ыйтусене ăнăçлăн татса пани ĕнтĕ союзниксем вăрçă хыççăнхи мирĕн тĕп ыйтăвĕсем тĕлĕшпе малашне те пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине кăтартса парать. Сăмах кунта, паллах, чи малтанах Германи милитаризмĕпе нацизмне пĕтересси çинчен пырать, мĕншĕн тесен вĕсене пĕтермесен çирĕп мир тума май пулмасть. «Союзниксем пĕр-пĕринпе килĕшсе, Германи хăйĕн кÿршисене тата пĕтĕм тĕнчери мире урăх нихăçан та хăратса тăма ан пултартăр тесе, халĕ те, малашне те тивĕçлĕ мерăсене йышăнма пултараççĕ». Ют çĕршывсенчи хаçатсенче Берлинри конференцин ларăвĕсем çав тери ăнăçлă ĕçленине палăртаççĕ. Çакă ĕнтĕ демократиллĕ аслă державăсен пĕрлĕхне кăтартса парать.

Ют çĕршывсенчи хаçатсенче Берлинри конференцин решенийĕсене пĕтĕм тĕнчипе питĕ хапăл туса кĕтсе илни çинчен çыраççĕ. «Дейли мейл» хаçат çапла çырать: ку «конференци нумая пыракан мире пуçласа яраканĕ пулса тăрать». Ассошиэйтед пресс агентствин дипломатиллĕ обозревателĕн шухăшĕпе, Ют çĕршыв ĕçĕсен Министрĕсен Советне туни виçĕ аслă держава мирлĕ конференцие тĕплĕн хатĕрленме шутланине, çапла вара Версальри мирĕн йăнăшĕсене малалла текех тăвас мар тесе тăрăшнине кăтартса парать.

«Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат çапла çырать: Берлинри конференци «Европăри мире çирĕплетес тĕлĕшпе тунă пысăк утăм пулса тăрать».

Малта пыракан прогрессивлă этемлĕх Берлинри конференцин решенийĕсенче пĕтĕм тĕнчери халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси лайăхланса пынине курать.

* * *

Нумай обозревательсем халĕ Англири парламент суйлавĕсем Англин тулашри тата шалти политикине мĕнле улăштарĕç-ши текен ыйтăва татса пама тăрăшаççĕ. Комментаторсенчен нумайĕшĕ çапла шутлаççĕ: суйлав результачĕсем чи малтанах шалти политикăра палăрĕç, мĕншĕн тесен суйлав умĕнхи кĕрешÿ шалти политика пирки пулнă. Çакна пула ĕнтĕ лейбористсем шалти политика тĕлĕшĕпе кăларса тăратнă реформăсен программине сÿтсе-яваççĕ. Хăйсен программинче лейбористсем промышленноçăн чылай отраслĕсене, вăл шутра çĕркăмрăкĕпе энергетика отраслĕсене национализацилеме палăртнă пулнă. Кунсăр пуçне, лейбористсем Англи банкне национализацилессишĕн, суту-илÿпе хаксене контроль туса тăрассишĕн, çавăн пекех тата пурăнмалли çуртйĕр строительствин аслă программине пурнăçа кĕртессишĕн тухса каланă пулнă. Англири суйлавçăсем çак мероприятисемшĕн сасăларĕç, консерваторсен программине пăрахăçа кăларчĕç. Консерваторсем Англири хуçалăх пурнăçне государство кирек хăш енчен те пулин контроль туса пырассине хирĕç пулнă, вăрçă вăхăтĕнче контроль туса пыма йышăннине пăрахăçа кăларма сĕннĕ.

Çĕнĕ правительствăна туса хуни пĕр эрне çеç иртнĕ пулин те, çав ыйтусем çинчен хаçатсем нумай çыраççĕ, Эттли кабинечĕ малалла мĕнле ĕçлесси çинчен сÿтсе-яваççĕ.

Лейбористсен хаçачĕ «Дейли Геральд» çапла çырать: çартан таврăнакан салтаксене пурăнма йĕркеллĕ условисем туса парас тесе, правительство хăйĕн ĕçне пурăнмалли çуртйĕр строительствин программине пурнăçа кĕртессинчен тытăнать. «Чикаго трибюн» хаçатăн Лондонри корреспонденчĕ правительство пурăнмалли çуртйĕр строительстви, ялхуçалăхĕ, социальнăй обеспечени тата сывлăх ĕçĕ енĕпе кăлармалли законсен проектне хатĕрлет, тесе пĕлтерет.

Суйлав умĕн лейбористсем Англи промышленноçĕн хăшпĕр отраслĕсене тата Англи банкне национализацилесси пирки кăларса тăратнă программа çинчен те питĕ нумай калаçаççĕ. Англири тата Америкăри хăшпĕр хаçатсем çапла çыраççĕ: правительство ку мероприятисене халех пурнăçа кĕртмест пулмалла, халĕ пурăнмалли çуртйĕр строительствин программи тĕлĕшпе çеç ĕçлет пулмалла. Анчах та лейбористсен партийĕн исполкомĕн председателĕ Геральд Ласки радио тăрăх промышленноçăн уйрăм отраслĕсене мĕнле черетпе национализацилесе пымаллине палăртнă та, тесе каланă. Чи малтанах, тенĕ Ласки, Англи банкне национализацилеççĕ, çавăн пекех тата капиталовложение контроль тума тытăнаççĕ. Ун хыççăн вара çĕркăмрăк шахтисене, электростанцисене тата хурçă промышленноçне национализацилеççĕ.

Англин çĕнĕ правительствин шалти политикин мероприятийĕсем тĕлĕшпе çакăн пек калаççĕ ĕнтĕ ют çĕршыв хаçачĕсенче тата Англири политика деятелĕсем. Çакна май нумай хаçатсенче çапла палăртаççĕ: çак мероприятисене пурнăçа кĕртнĕ чухне çĕнĕ правительствăн лейбористсем суйлавра çĕнтернине çеç мар, тата суйлавçăсен сарлака массин шухăш-кăмăлне те шута илмелле.

Англири суйлавсен результачĕ Англи правительствин тулашри политикин никĕсне улăштармасть, тесе палăртаççĕ ют çĕршыв обозревателĕсем. Суйлав умĕнех Англин хальхи премьер-министрĕ Эттли хăйĕн пĕр сăмахĕнче çапла каланăччĕ: «кирек епле ĕçĕн ăнăçлăхĕ те вăрçă вăхăтĕнче туптаса çирĕплетнĕ юлташлăха малашнехи мирлĕ тапхăра та тăснинчен килет». Англин çĕнĕ правительствин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бевин суйлав умĕнхи пĕр пысăк митингра çапла каланă: «лейбористсен партийĕн тĕллевĕ Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене, Англие тата Российăна пĕр-пĕринпе çирĕп килĕштерсе ĕçлеттересси пулать».

Англири лейбористсен çĕнĕ правительствин пулас шалти тата тулти политикине çакăн пек хаклаççĕ.

Д. МЕЛЬНИКОВ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Шупашкарти пир-авăр фабрики çумĕнчи ФЗУ шкулĕ çакăн пек специальноçлă рабочисене вĕрентме илесси çинчен пĕлтерет: ткачсем, мастер помощникĕсем, ватерщицăсем, банкаброшницăсем, строительсем. 14 çултан иртнĕ çамрăксене илеççĕ. Вĕренме илнисене общежитие вырнаçтараççĕ, кĕпе-тумтир параççĕ, тÿлевсĕр виçĕ хутчен апат çитереççĕ тата уйăхне 75—140 тенкĕ стипенди параççĕ. Профессисене кура 9 уйăхран пуçласа 2 çул таран вĕрентмелле.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Ленинградская, 3.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.
НТ 00386 Типография №1, Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. 6. 59 42 п. п. Тираж 16.000